26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
6
ЭРНЕКУН
156(6393) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Коммунистсемпе комсомолецсем—уборка ĕçĕсен организаторĕсем

Республика уйхирĕсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕç пырать. Малта пыракан районсемпе колхозсем уборка ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Елчĕк, Чкаловски, Комсомольски районсенчи малта пыракан колхозсем кĕрхи тырăсене пĕтĕмĕшпех вырса пуçтарса çуртыррисене пухса кĕртме тытăнчĕç.

Иртнĕ кунсенче йĕпе-сапаллă çанталăк тăчĕ. Çапах уйхирте ĕç чарăнмарĕ. Ĕçлеме пĕлекен колхозсем çăмăр çуман вăхăтăн кашни сехечĕпе пĕлсе усă курчĕç: тырă вырчĕç, пуса татса шыва хутрĕç, витнĕ итемсенче авăн çапрĕç, хатĕрлев пункчĕсене тырă леçрĕç тата ытти ĕçсене те пурнăçа кĕртрĕç.

Çанталăк йĕпе тăни тырпулсене пухса кĕртес ĕçе йывăрлатрĕ. Пулса çитнĕ тырра тăкăнма тата çĕмеле хывнă тырра шăтса кайма памалла мар. Мĕнпур тырра тирпейлĕн пухса кĕртмелле. Çак пысăк та ответлă задачăна пурнăçа кĕртме пирĕн пур майсемпе те усă курмалла.

Уборка ĕçĕсен ăнăçлăхĕ халĕ вырăнти партипе совет организацийĕсем, ялти коммунистсемпе комсомолецсем колхозниксен, МТС-семпе совхозсенчи работниксен производствăллă тата политикăллă активлăхне пуçарса ертсе пыма пĕлнинчен, уборка ĕçĕсене тата ялхуçалăх продукчĕсен хатĕрлевĕсене тĕрĕс организацилеме пултарнинчен килет.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1943 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» постановлени йышăнчĕç. Ку постановленире тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тапхăрти задачăсене уççăн кăтартса панă. Партипе комсомол организацийĕсен çак постановление пурнăçа кĕртме колхозниксен анлă массисене мобилизацилемелле.

Чкаловски районри «Красный Октябрь» колхоза территориальнăй пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Хуснутдин Булатов ертсе пырать. Ку колхоз кăçалхи çуракине те, кĕрхи тырăсене вырса пуçтарас ĕçе те районри колхозсенчен чи малтан пурнăçа кĕртнĕ. Булатов юлташ колхозри ĕç вăйне тата коммунистсемпе комсомолецсене тĕрĕс вырнаçтарса тухнă.

Ялти коммунистсемпе комсомолецсен вырăнĕ халĕ—тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсен хатĕрлевĕсене иртерес ĕçсен ăнăçлăхне татса панă çĕрте,—уйхир ĕçĕсен бригадисенче, трактор бригадисенче тата тырă турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен транспорт бригадисенче пулмалла. Вĕсем унта хăйсем стахановла ĕçĕн чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса пама тата большевикла чăн сăмахпа мĕнпур колхозниксене мобилизацилесе тăма, ÿрĕк-çÿрĕк ĕçлекенсемпе, ĕçе тухмасăр кахалланса пурăнакансемпе хăюллăн кĕрешме тивĕçлĕ.

Анчах Красноармейски районри Упири «Коминтерн» колхозра кахалсемпе пачах çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Колхозниксем ĕçе ир тухмаççĕ е тата хăш-пĕрисем ирхине ĕçе тухса ятне тăваççĕ те кăнтăрлаччен киле тарса кĕреççĕ, каçхине ĕç пĕтес умĕн çеç ĕçе тухаççĕ. Çак кахалсене колхозри коммунистсемпе комсомолецсем пĕлсе тăраççĕ, анчах ĕç дисциплинине çирĕплетме тăрăшмаççĕ. Агитацилле-массăллă ĕçе сÿрĕк туса пыраççĕ.

Уйхирте ырми-канми ĕçлекенсем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе хальхи вăхăт ыйтнă пек йĕркелемелле. Кашни колхозникпе колхозница, комбайнерпа комбайнерка, трактористпа трактористка Совет Информаци Бюровĕн сводкисене, совет воинĕсен фронтри паттăр ĕçĕсем тата тĕнчери лару-тăру çинчен вăхăтра пĕлсе тăтăр, тырпулсене пухса кĕртес ĕç ылханлă тăшмана аркатса тăкас ĕçпе таччăн çыхăнса тăнине яланах асра тыттăр.

«Агитатор малти линире çапăçакан боец умне тÿрех çакăн пек ыйту лартма тивĕçлĕ: эсир эрне хушшинче пĕр нимĕçе те вĕлермен пулсан—ку вăл эсĕ тăван çĕршыв умĕнчи хăвăн тивĕçлĕхе начар пурнăçа кĕртнине, çĕнтерÿшĕн çÿрĕк кĕрешнине пĕлтерет». (КАЛИНИН.)

Ÿрĕк-çÿрĕк ĕçлекен е кахалланса пурăнма пăхакан колхозниксем умне те çавăн пек ыйту лартма пулать: «Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре ÿрĕк-çÿрĕк ĕçлетĕн пулсан,—эсĕ тăван çĕршывпа фронт интересĕсемшĕн çителĕксĕр тăрăшатăн».

Ялти коммунистсемпе комсомолецсен халĕ тырă вырса пуçтарнипе пĕр вăхăтрах авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсене лайăх организацилессишĕн çине тăрса кĕрешес пулать.

Коммунистсемпе комсомолецсем кирек мĕнле ĕçре те социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пыракансем пулмалла. Стахановла ĕçлекенсен опытне сарса, колхозниксене малта пыракансемпе танлашма, ĕç нормисене пурнăçлама тата иртерсе пурнăçлама пулăшмалла.

Коммунистсемпе комсомолецсен тата агитаторсен аллинче социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пыма лайăх майсем пур. Орденлă Чăваш республикин аллинче Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавĕ вĕлкĕшсе тăрать. Ку ялава пире иртнĕ çул выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемшĕн панă. Кăçал та, ялхуçалăхĕнчи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республикăна пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешнĕ çĕрте тата выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес тĕлĕшпе лайăх результатсем панăшăн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă. ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, комсомол организацисен çуракине хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, комсомолăн Чăваш республикинчи организацине ВЛКСМ Центральный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă.

Çапла, ăмăртăва организацилеме пирĕн пуян документсем пур. Ялсенчи коммунистсемпе комсомолецсен тата агитаторсен çак историллĕ документсене тата СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине колхозниксене тимлĕн ăнлантарса парса, вĕсене социализмлă ăмăртăва активлăн явăçтармалла, уборка ĕçĕсене кăтартуллăн иртерме мобилизацилемелле.

Партипе комсомолăн ялсенчи тата МТС-сенчи организацийĕсен кунпа пĕрлех Чкаловски облаçри малта пыракан комбайнерсемпе трактористсем пĕтĕм союзри комбайнерсемпе трактористсене чĕнсе каланине республикăри кашни комбайнерпа комбайнерка, трактористпа трактористка патне çитермелле, вĕсене комбайнерсемпе трактористсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнтарассишĕн кĕрешмелле. Республика уйхирĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсен тата комбайнерсемпе трактористсен пархатарлă ĕçĕ фронтри боецсен ĕçĕпе танлаштăр.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Çумăр нумай çунипе тырпул ан пĕттĕр тесе тата ăна часрах çапма май пултăр тесе, Чăваш АССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райисполкомсемпе парти райкомĕсене **колхозсенче тырра кĕлтесенче типĕтмелли простой авăнсем** тăвас ĕçе халех организацилеме хушнă. Кашни уйхир бригади пуçне пĕрер авăнран кая мар тумалла. Республикипе 5.530 авăн тумалла.

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ Вăрман сыхлас тата вăрман лартас ĕç управленийĕн начальникне Яковлев юлташа колхозсене авăнсем тума 11.748 кубометр шерте пама хушнă.

Урлă çĕмелсемпе майрапуççенче тырă шăткаланине шута илсе, Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ райисполкомсемпе парти райкомĕсене вырнă тырра халех тĕрĕслесе тухма хушнă, йĕпе кĕлтесене çивиттисем айĕнче, сарайсенче тата ытти пушă хуралтăсенче типĕтме хушнă, уйхирсенче вырнă тырра çыхмасăр хăварма тата кĕлтесене урлă çĕмелсене купалама чарса лартнă. Кĕлтесене пысăк çĕмелсене купаламалла, çĕмелсенче сывлăш çÿремелли хушăксем хăвармалла.

Выртнă тырă хăшпĕр тĕлте шăтсаланине шута илсе, Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ райисполкомсемпе райкомсене чи малтан çав выртнă тырра вырма тата кĕлтесене çийĕнчех типĕтме хушнă. Çавăн пекех тата тĕштырăсен, пуринчен ытла пăрça йышши культурăсен вăрлăхлăх участокĕсене тĕрĕслесе тухма хушнă. Çав участоксенче нумай пĕрчĕ шăтнине курсан, вăрлăхлăх участоксене тырă лайăх пулнă участоксемпе улăштармалла.

Верховный Главнокомандующин приказĕ

Генерал-полковника ПОПОВА
Генерал-полковника СОКОЛОВСКИНЕ
Арми генералне РОКОССОВСКИНЕ
Арми генералне ВАТУТИНА
Генерал-полковника КОНЕВА

Паян, августăн 5-мĕшĕнче, Брянск фронтĕнчи войскăсем, Хĕвеланăç тата Центральнăй фронтсенчи войскăсем флангсенчен пулăшнипе, хаяррăн çапăçнă хыççăн Орел хулине йышăнса илнĕ.

Паянах Çеçенхир тата Воронеж фрончĕсенчи войскăсем противник хирĕç тăнине çĕнтернĕ те Белгород хулине йышăнса илнĕ.

Пĕр уйăх каярах, июлĕн 5-мĕшĕнче, Курск патĕнче малалла тухса тăракан пирĕн войскăсене хупăрласа илсе пĕтерсе тăкас тата Курска тытса илес тесе, нимĕçсем Орелпа Белгород районĕсенчен хăйсен çуллахи наступленине пуçласа ячĕç.

Противник Орелпа Белгород енчен Курск патнелле шăтарса кĕме хăтланнисене пурне те сирсе ярса, пирĕн войскăсем хăйсем наступление куçрĕç те августăн 5-мĕшĕнче, нимĕçсен июльри наступленийĕ пуçланнă хыççăн шăпах пĕр уйăх иртсен, Орелпа Белгорода йышăнса илчĕç.

Çапла вара, совет войскисем çулла ăнăçлă наступлени тума пултараймаççĕ тесе нимĕçсем калакан юмаха тăрă шыв çине кăларнă.

Тунă çĕнтерĕве палăртас майпа, 5, 129, 380-мĕш стрелковăй дивизисене, Орел хулине чи малтан кĕрсе кайса ăна ирĕке кăларнăскерсене, „Орловски" ят парас тата малашне вĕсене çапла чĕнмелле тăвас: 5-мĕш Орловски стрелковăй дивизи, 129-мĕш Орловски стрелковăй дивизи, 380-мĕш Орловски стрелковăй дивизи.

89-мĕш Гвардейски тата 305-мĕш стрелковăй дивизисене, Белгород хулине чи малтан кĕрсе кайса ăна ирĕке кăларнăскерсене, „Белгородски" ят парас тата малашне вĕсене çапла чĕнмелле тăвас: 89-мĕш Гвардейски Белгородски стрелковăй дивизи, 305-мĕш Белгородски стрелковăй дивизи.

Паян, августăн 5-мĕшĕнче 24 сехетре, пирĕн Тăван çĕршывăн столици—Мускав 120 орудирен вуникĕ хут пĕр харăс персе, Орелпа Белгорода ирĕке кăларакан хамăрăн паттăр войскăсене салют парать.

Питех те лайăх наступлени тунăшăн эсир ертсе пыракан мĕнпур войскăсене, Орелпа Белгорода ирĕке кăларнă çĕрте пулнăскерсене, тав тăватăп.

Пирĕн Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн кĕрешсе вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1943 çулхи августăн 5-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂРАН

Августăн 4-мĕшĕнче ОРЕЛ енче пирĕн войскăсем, ăнăçлăн малалла тапăнса пырса, 6 километртан пуçласа 10 километра çити малалла куçнă, ОРЕЛ хулине кĕрсе кайнă, халĕ тăшманпа хула урамĕсенче çапăçаççĕ. Пирĕн войскăсем Орел енче августăн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче халăх пурăнакан 80 пункта ытла, вăл шутра СТАЛЬНОЙ КОНЬ чугунçул станцине (Орелран 6 километр çурçĕртерехре) тата СВЕТЛАЯ ЖИЗНЬ чугунçул станцине (Орелран 4 километр кăнтăртарахра) йышăнса илнĕ.

БЕЛГОРОД енче пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç çапăçусем пуçласа янă, 10 километр малалла куçнă, хăйсен позицийĕсене чылай лайăхлатнă.

Донбасра ВОРОШИЛОВГРАДРАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРИ районра пирĕн войскăсем вырăнти çапăçусем туса пынă, çав çапăçусенче хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

ЛЕНИНГРАД фронтĕнче Мга хулинчен çурçĕртерехри тата хĕвелтухăçнерехри районра икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 3-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен 236 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 138 самолетне ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă.

Орелран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем хăйсен пехотине татти-сыпписĕр конратакăна кĕртсе яраççĕ. Пехотăна çав контратакăсене тума танксем, хăй тĕллĕн çÿрекен орудисем тата авиаци пулăшса пырать. Совет войскисем тăшманăн пур контратакисене те сирсе янă, нимĕçсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Нимĕçсен 32 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата тăшманăн пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Тыткăна лекнĕ нимĕçсем пĕлтернĕ тăрăх, тăшманăн 211-мĕш пехотнăй дивизийĕ юлашки çапăçусенче хăйĕн составне 70 процент ытла çухатнă.

Совет войскисем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, Орела кĕрсе кайнă, халĕ унта тăшманпа хула урамĕсенче çапăçаççĕ.

Орелран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем 6 километртан пуçласа 10 километра çити малалла куçнă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункта тăшман хытă хÿтĕлесе тăнă. Çав пункта туртса илмешкĕн уйрăмăнах хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Совет боецĕсем çав пункта хÿтĕлекен нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă та ăна йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче пирĕн чаçсем 1500 гитлеровеца çити, 18 танк, артиллерипе минометсен 13 батарейине тата боеприпассем тиенĕ 120 автомашинăна ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 15 танк, 16 оруди, 40 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. 10 оруди, 32 миномет, 110 пулемет, 11.000 снаряд, 2 миллион патрон, 68 тонна тар тата сирпĕнтерекен япаласем тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци тăшман войскисен колоннисене штурмланă, вĕсем çине бомбăсем тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 54 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Белгород енче пирĕн войскăсем тăшмана хирĕç çапăçусем пуçласа янă, 10 километр малалла куçса, хăйсен позицийĕсене чылай лайăхлатнă. Нимĕçсем хăйсен малтанхи позицийĕсене каялла туртса илме хăтланнисем пурте пăчланса ларнă. Тăшмана çынсем енĕпе те, техника тĕлĕшĕнчен те йывăр çухатусем кÿнĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи войскăсене тăшмана çĕмĕрме активлăн пулăшса тăнă. Бомбăсем пăрахса, авиаци тăшманăн нумай танкне тата 300 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 44 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине персе тăнă. Пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем нимĕçсен 2 танкне, темиçе орудине пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. 30 дзот тата 6 наблюдательнăй пункт ишсе антарнă. Пирĕн подразделенисем, активлăн вăрçса, нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пĕр чаçăн подразделенийĕсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Пирĕн боецсем гитлеровецсенчен пĕр ращана тасатнă та вăйлă çирĕплетнĕ позицисене тытса илнĕ. Совет подразделенийĕсем малалла куçса пынине чарса лартас тесе, тăшман темиçе хут та контратака тунă. Çав контратакăсене сире-сире ярса, пирĕн боецсем темиçе çĕр гитлеровеца вĕлернĕ, нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Новосибирскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре разведчиксен ушкăнĕ, Орлов капитан командир пулса ертсе пынипе, çĕрле нимĕçсен траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă та гитлеровецсен пысăк ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Унтан разведчиксем трофейăсем тытса илнĕ те хăйсен чаçне каялла тĕрĕс-тĕкел таврăннă. Пĕр подразделенири снайперсем 7 кун хушшинче тăшманăн 66 салтакне вĕлернĕ. Снайпер Сысов юлташ 12 нимĕçе вĕлернĕ, Вилгурин юлташ—8 нимĕçе, Кондратенкăпа Скопцов юлташсем кашни 7-шер гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрядĕнчи разведчиксем нимĕçсем партизансен базине тапăнма хатĕрленни çинчен пĕлнĕ. Отряд командованийĕ нимĕçсенчен маларах тăшмана хăйне тапăнма решени йышăннă. Июлĕн 27-мĕшĕнче тул çуттипе партизансем нимĕçсен карательнăй отрядне сасартăк атакăланă та 68 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Боеприпассем тиенĕ лавсем нумай тытса илнĕ. Гомель облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрядĕ июлĕн 24-мĕшĕнче нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Паровоз тата 30 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

Орелпа Белгорода ирĕке кăларакан паттăр войскăсене Мускав салют парать

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ панă Приказ тăрăх, ĕнер, августăн 5-мĕшĕнче, пирĕн Тăван çĕршывăн столици — Мускав Брянск фронтĕнчи паттăр войскăсене, Хĕвеланăç тата Центральнăй фронтсенчи войскăсем флангсенчен пулăшнипе Орел хулине ирĕке кăларнăскерсене, Çеçенхир тата Воронеж фрончĕсенчи Белгород хулине ирĕке кăларнă войскăсене салют панă.

Шăп 24 сехетре 120 орудирен пĕрремĕш хут пĕр харăс пенĕ. Пĕтĕмпе 12 хут пенĕ, кашни вăтăр секундăра пĕр хут персе, 6 минута хушши персе тăнă войскăсене салют панă.

Пирĕн авиаци Брянск, Никитовка, Ясиноватая, Иловайская чугунçул узелĕсене, Мга станцине тата тăшман аэродромĕсене тапăнни

Августăн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Брянск, Никитовка, Ясиноватая, Иловайская чугунçул узелĕсене тата Мга станцине тапăннă. Тăшманăн эшелонĕсем, çар склачĕсем, пĕрле пуçтарăнса тăнă войскисемпе техники çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнине пула темиçе чугунçул составĕ çĕмĕрĕлнĕ. Пушарсем нумай тухнине тата вăйлă взрывсем пулнине палăртнă.

Çавăн пекех тата пирĕн авиаци аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Çак аэродромсем çинче нимĕç çамолечĕсем нумай пулнă. Бомбăсем пăрахса тăшманăн чылай нумай самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене—ăшă тумтирсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ совет войскисене саламласа панă приказа районри ĕççыннисем ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Мухтавлă воинсен фронтри паттăрлăхĕ вĕсене фронта пулăшас тĕлĕшпе татах та вăйлăнрах ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Çулпуçăн приказне ответлесе, районри колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухма тытăнчĕç.

«Новая сила» колхоз членĕсем икĕ-виçĕ кун хушшинче 76 мăшăр çăм носкисемпе алшăлсем, «Прогресс» колхоз колхозникĕсем 50 мăшăр çăм алшăлсемпе носкисем пухрĕç.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Республикăри колхозсенче кĕрхи тата çурхи тырăсене вырас ĕç августăн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан сводка

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырăсене вырнă (процентпа)
Куславкка	27,8
Елчĕк	27,6
Тăвай	25,9
Вăрмар	25,2
Шăмăршă	20,5
Сĕнтĕрвăрри	20,2
Чкаловски	20,0
Комсомольски	19,6
Шăхасан	17,6
Октябрьски	17,4
Советски	17,1
Вăрнар	15,7
Хĕрлĕ Чутай	15,7
Етĕрне	15,0
Калинино	14,2
Канаш	13,4
Улатăр	12,2
Элĕк	11,4
Шупашкар	11,4
Çĕрпÿ	10,6
Пăрачкав	9,9
Первомайски	9,8
Сĕнтĕр	9,5
Çĕмĕрле	9,0
Красноармейски	6,7
Куввакино	6,2
Ишлей	5,3
Йĕпреç	2,8
Шупашкар хули	5,5
ЧАССР тăрăх	15,6
Июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне пулнă	5,9

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçре ўрĕк-сўрĕк ĕçлетĕн пулсан,— эсĕ тăван çĕршывпа фронт интересĕсемшĕн çителĕксĕр тăрăшатăн

Тракторист Луньков çулталăк планне тултарнă

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков тата ЧАССР Наркомземĕ Малов юлташсен ячĕпе Пăрачкав МТС тракторисчĕ Луньков юлташ çакăн пек телеграмма янă:

«Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпĕ хамăн тракторпа 1943 çулта тумалли ĕçсен планне срокчен тултартăм. Çулталăк вĕçлениччен тата тепĕр çулталăк норми чухлĕ ĕçлеме сăмах паратăп.

Пăрачкав МТС тракторисчĕ Луньков».

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ Пăрачкав МТС-не тракторист Луньков юлташ ятне çакăн пек саламлă телеграмма ячĕ:

«ВКП(б) Чăваш Обкомĕ Сире хăвăр ĕçлевен тракторпа çулталăкри производствăллă плана срокчен тултарнă ятпа хĕрўллĕн саламлать тата хăвăр çине илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçлама, 1943 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен сезонĕ вĕçлениччен тата тепĕр çулталăкри норма чухлĕ ĕçлеме ăнăçлăх сунать.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ
И. ЧАРЫКОВ».

Коммунистка Иванова ертсе пыракан трактор бригади çулталăкри плана тултарчĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (**Телефонпа**). МТС-ри коммунистка Е. Иванова юлташ ертсе пыракан трактор бригади августăн 1-мĕшне çулталăкри плана 113 процент тултарчĕ. План тăрăх, çемçе суха çине куçарсан, 771 гектар сухалламалла пулнă пулсан, унăн бригади 971 гектар сухаланă. Çав сăхăтрах 470 килограмм горючи перекетленĕ хăварнă.

Çак бригадăри комсомолка-трактористкăсенчен уйрăмах Серафима Ивановăпа Елена Николаева палăрчĕç. С. Иванова комсомолка сезонра 150 гектар сухалас вырăнне 220 гектар сухаланă. Çавăн пекех Е. Николаева юлташ та плана 104 процент тултарнă.

Иванова ертсе пыракан 8-мĕш бригада халĕ кĕрхине тухма хатĕр.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Комбайнерсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнаççĕ

ШĂМĂРШĂ, августăн 3-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Шăмăршă МТС-ĕнчи комбайнерсемпе трактористсем июлĕн 29-мĕшĕнче Чкаловски облаçри комбайнерсемпе малта пыракан трактористсен чĕнĕвне сўтсе-яврĕç. Комбайнерсемпе трактористсем Чкаловски облаçĕнчи комбайнерсен чĕнĕвне ырларĕç, 1943 çулти тырпула пухса кĕртес ĕçе отлично туса ирттересси пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме пулчĕç, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Пирĕн МТС-ри тырпулсене комбайнпа пухса кĕртес ĕçĕн мастерĕсем—Аверьянов тата Фадеев юлташсем «Коммунар» комбайнсемпе кăçал 700-шер гектар тырă пухса кĕртме обязательство илчĕç. Çакă вăл Чкаловски облаçри комбайнерсем илнĕ обязательствăран та чылай пысăкрах. Анчах пирĕн мастерсен çавăн чухлĕ тырă пухса кĕртме пур условисем те пур. Валейк, Орлов, Баженов комбайнерсем «Коммунар» комбайнпа 400-шер гектар пухса кĕртме обязательство илчĕç.

Шăмăршă МТС-ĕ кăçал Первомайски МТС-ĕпе ăмăртса ĕçлет. Халĕ Чкаловски облаçри комбайнерсен чĕнĕвне сўтсе-явса çĕнĕ обязательствăсем илсе, пирĕн МТС-ри комбайнерсемпе трактористсем Первомайски МТС-ри трактористсемпе комбайнерсене ăмăртса ĕçлеме чĕнеççĕ.

ВИСЛОБОКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пуса татса пĕтерне

КАНАШ. «Динамо» колхоз районра чи малтан кантăр пусине татса пĕтерчĕ. Çавăн пекех Чкалов ячĕпе тăракан колхоз та 7 гектар çинчи пусана татса пĕтерчĕ. Ку колхозри пĕрремĕш бригада татнă пусана шыва хутнă. Анчах та «1-ое Мая», «Малалла», «Канаш», «Комсомол», Каганович ячĕпе тăракан колхозсем пуса татма васкамаççĕ-ха.

Т. ТУРХАН.

ЙĔПЕННĔ ТЫРРА АВĂНРА ТИПĔТЕÇÇĔ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, августăн 5-мĕшĕ (**Телефонпа**). Район кĕрхи тырăсен 50 процентне вырса пуçтарчĕ. 7 колхоз ыраш тата кĕрхи тулă вырса пĕтерсе çуртыррисем вырма пуçларĕç. Уборка ĕçĕсене коммунистсем ертсе пыракан колхозсенче уйрăмах лайăх организациленĕ.

Папанин ячĕпе тăракан колхоза коммунистка Полетаева юлташ ертсе пырать. Ку колхоз ыраш вырас тĕлĕшпе кăтартуллăн ĕçлет. Унта тырăсене пăсăласран тата вăрă-хурахсенчен сыхлассине лайăх йĕркеленĕ. Колхозра çăмăрпа йĕпенне кĕлтесене типĕтме çак кунсенче 6 авăн тунă. Кашни авăнра кулленех 10-шар лав кĕлте типĕтме пулать. Çанталăк йĕпе-сапаллă вăхăтра колхозниксем çăмăрпа йĕпеннĕ кĕлтесе авăнра типĕтсе çапрĕç.

Коммунистсем Акчурин, Иванова, Коновалов юлташсем ертсе пыракан „Красный Октябрь“, „Трактор“ тата Шмидт ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене районри колхозсенчен пуринчен маларах вырса пуçтарчĕç. Вĕсем тырă вырнă вăхăтрах авăн та çапрĕç, хатĕрлев пунктне тырă леçрĕç. Асăннă колхозсенче пуринче те витнĕ итемсем пур.

„1-мĕш Искра“ колхозра агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркеллĕ туса пыраççĕ. Тузметов, Воронцов, Родионова агитаторсем хирте тырă выракан колхозниксемпе пĕрле ĕçлеççĕ. Кĕске кану е апат çинĕ вăхăтра вĕсем колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе паллаштараççĕ, фронтри эпизодсем çинчен каласа параççĕ. Кашни бригадăрах боевой листоксем тухса тăраççĕ. Хисеп хăмисем пур.

В. АНДРЕЕВ.

Хĕрлĕ обозсен пуçĕнче— комсомолецсем

ОКТЯБРЬСКОЕ, августăн 5-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Ĕсмĕлти „Волга“ колхозри комсомолецсем государствăна тырă, пахча-çимĕç турттарас тĕлĕшпе ялан ĕçлекен транспорт бригади организациленĕ. Ăна А. Ижутов комсомолец ертсе пырать. Бригадăра Н. Занюшкин, Н. Ижутов комсомолецсем, колхозник Григорий Ижутов тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем июлĕн 31-мĕшĕнче хатĕрлев пунктне 15 центнер çĕнĕ тырă леçрĕç.

П. ЛЕПАР.

Мексика послĕ Л. Кинтанийа господин СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне М. И. Калинин юлташа хăйĕн верительнăй грамотисене пани

Августăн 4-мĕшĕнче, кăнтăрла 12 сехетре, Кремльре СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Мексикăри Пĕрлешўллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолне Л. Кинтанийа господина йышăннă. Л. Кинтанийа господин М. И. Калинин юлташа хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Л. Кинтанийа господинпа пĕрле Посольствăн Çар Атташи подполковник Р. Калдерон Агиляр, Посольствăн иккĕмĕш секретарĕ Э. Эспиноса-Приетто господин тата Мексикăн ССР Союзĕнчи Посольствин ытти членĕсем те пулнă. Посол вĕсене М. И. Калинин юлташпа паллаштарнă.

Верительнăй грамотăсене панă чух Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ, НКИД-ăн Америкăри çĕршывсен отделĕн заведующийĕ Г. Н. Зарубин юлташ, НКИД-ăн протоколсен отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ пулнă.

Верительнăй грамотăсене панă хыççăн М. И. Калинин юлташпа Л. Кинтанийа господин хушшинче калаçу пулса иртнĕ

Шкул валли вутă хатĕрлес ĕç сўрĕк пырать

СОВЕТСКОЕ. Хĕллехи вăхăтра хутма районăн шкулсем валли 2.889 кубометр вутă хатĕрлемелле. Анчах вутă хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Районри 40 шкулран 10 шкул çеç хĕл каçма вутă хатĕрлесе çитерне.

Вутă хатĕрлес ĕçĕпе Шĕмшеш, Чуманкасси, Мăн Явăш, Утаркă шкулĕсем кăна çителĕклĕ ĕçленине палăртмалла. Çав вăхăтрах Анаткасри, Ильдубайкинăри пуçламĕш шкулсем пĕр пуленке вутă та хатĕрлемен. Ку ĕçе Исменер (заведующийĕ Е. Никишова), Асламас (директорĕ А. Петровская), Тушкасси (заведующийĕ Н. Орлова), Турай (директорĕ А. Герасимов) шкулĕсем те çителĕксĕр хутшăннă.

Шкулсем валли вутă хатĕрлевне пĕрлех учительсен хваттерĕсем валли те вутă хатĕрлес пулать. Анчах çакна чылай шкулсен директорĕсемпе заведующийĕсем асра тытмаççĕ.

Я. СИГАЙ, М. СТЕПАНОВА.

Ютçĕршывсенче

Италири лару-тăру

Рим урамĕсенче пулеметсемпе броневиксем.—Çурçĕр Италири хуласенчен халăх тарать

Хаçатсенче çырса пĕлтернĕ тăрăх, Итали влаçĕсем забастовка тăвакан рабочисене ĕçлеттерме тăрăшни ăнăçман.

Милан хулинче урама тухнă халăх хула тĕрмине штурмласа илнĕ те тĕрмере политика тĕлĕшпе ларакан 200 çынна ирĕке кăларса янă. Салтаксем демонстраци тăвакан халăх çине пеме килĕшмен. Влаçсем паракан приказсене кунта çар полицийĕ кăна итлет. Анчах вăл нимĕн те тăваймасть, унăн вăй çитмест.

Урама тухнă халăх Муссолинин урамри кĕлеткин пуçне касса татнă, унтан çав пуççăр кĕлеткене урам тăрăх сĕтĕрсе çўренĕ.

Хулара çар транспорчĕсене пулеметпа пенисем пулнă. Вилнисемпе аманнисем пур.

Миланри предприятисенче рабочисем ĕçлеме пăрахнă.

Çурçĕр Италири чугунçулсем çинче железнодорожниксем забастовка пуçласа янă пирки поездсем çўресси пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех чарăнса ларнă.

Çурçĕр Италири хресченсем влаçсене тырпул пама килĕшмеççĕ.

Генуйăра портри рабочисем нумайĕшĕ ĕçлеме пăрахнă. Урамсенче халăхпа çар патрулĕсем хушшинче тытăçса илнисем пулнă.

Римра фашизма хирĕçле демонстрацисем пулса пыраççĕ. Хулара тĕрлĕ çĕрте пулеметсем лартса тухнă. Урамсем тăрăх броневиксем çўреççĕ.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, июлĕн 31-мĕшĕнче каçхине Çурçĕр Италири хуласенче пысăк демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрантсем Бадольо правительствине сирпĕтме тата халех мир тума ыйтнă. Çар чаçĕсем, демонстрантсем майлă пулса ўксе, вĕсемпе хутшăнса кайнă.

Союзниксем Итали çине каллех бомбăсем пăрахма тытăнатпăр тесе систерсе каланă хыççăн Миланран, Тувинран тата Çурçĕр Италири ытти хуласенчен те августăн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле 3 миллион çын таран яла тухса тарнă. (ТАСС).

НЬЮ-ЙОРК, августăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Италире чугунçулсем çинчи забастовка çаплах чарăнмасть. Болоньяпа Флоренцирен Милана тата Турина васкаса янă çар полицийĕпе карабинерсем унта демонстрацисенче пулнă халăхпа салтаксене нумай арестленĕ.

Туринра тухса тăракан „Стампа“ хаçатăн цензурăна пăхтармасăр кăларнă номерĕ халăх политика тĕлĕшпе тĕрмере ларнă çынсене нумайĕшне ирĕке кăларса яни çинчен калакан хыпарсем чăннине çирĕплетсе парать. Влаçсем çав тĕрмерен кăларнă çынсене виçĕ кун хушшинче каялла пыма хушнă, пымасан вĕсене хытă айăплассипе хăратаççĕ.

Бадольо правительствине хирĕç тăрасси пĕтĕм Италипех сарăлса пырать. Ку ĕçе политикăллă пилĕк парти ертсе пырать.

Миланра тата промышленноçлă ытти центрсенче те прокламацисем нумай сарăлаççĕ. Прокламацисенче Бадольона вăл нимĕçсем майлă ĕçлет, çĕршыва мир туса парасшăн мар, тесе айăплаççĕ.

Нимĕçсем Крит утравĕ çинчи итальянецсен войскисенчен хĕçпăшалсене тытса илме хăтланаççĕ

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Крит утравĕ çинчи итальянецсен войскисенчен хĕçпăшалсене тытса илме хăтланаççĕ, итальянецсен главнокомандующине тата унăн штабне арестленĕ. Çапла хăтланса вĕсем, Итали вăрçă вăрçма пăрахас пулсан, итальянецсене киле таврăнма чарасшăн. Итальянецсен темиçе чаçне Критăн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсене кайма приказ панă. Çавăнта çитсен, вĕсен хĕçпăшалне туртса илнĕ. Итальянецсен артиллерири офицерĕсем, Германи командованийĕн ставкине пыма панă приказа пурнăçлама килĕшмен. Итальянецсен пĕр чаçне нимĕçсем çапăрса илнĕ те пеме пуçланă. Нимĕçсем ытти чаçсене те тапăнатпăр тесе хăратаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПАЛАЧСЕН ИРСĔРЛĔХĔ

Пирĕн çĕршывра та, пĕтĕм тĕнчере те Хĕрлĕ Çар воинĕ тенĕ ятран хисеплĕрех ят урăх çук. Хĕрлĕ Çар воинĕн кăкăрне Гитлер мăлатукĕ йывăр сунтал çине пенĕ пек пеме пуçларĕ, анчах та пĕтĕм этемлĕхе пĕтерсе лартмашкăн сулса янă çав мăлатук вырăс халăхĕн хăватлă кăкăрне лексе хуçăлчĕ.

Гитлерла çар машини çав тери вăйлăн хĕснине Хĕрлĕ Çар воинĕ икĕ çул хушши чăтса тăчĕ, сулланмарĕ, шухăш-кăмăлĕ унăн хавшамарĕ, Хĕрлĕ Çар воинĕ пĕтĕм Европăн йыткĕтĕвĕсемпе тата техникипе пĕччен кĕрешрĕ. Вăрçă çулĕнче вăл хăйĕн тăшманĕнчен çирĕпрех, тимлĕрех, ăслăрах, чăтăмлăрах тата лайăхрах пулса пычĕ; вырăс воинĕн чунĕ хăйĕн тăван çĕршывне юратас тата тăшмана кураймасăр пурăнас тĕлĕшрен çивĕчленсе, çирĕпленсе пычĕ.

Çĕр фашистла тĕнĕл тавра çавăрнас çук. Нимĕçсем хăйсене хăйсем „господасен раси“ тесе пурăнаймĕç, ытти халăхсен государствисемпе культурисенче выльăх картинче хуçаланнă пек хуçаланаймĕç, хăйсене килĕшмен йăхсене пĕр çын хăвармиччен вĕлерсе тухаймĕç, ют çĕрсене сухалаймĕç, океансене свастикăллă флагпа варалаймĕç. Нимĕçсем, ахлатса, хăйсен çурăмĕсем çине кирпĕч йăтмалли носилкăсем çакĕç, аллисене штукатура кĕреçисем тытĕç, хăйсем мĕн çĕмĕрнине тепĕр хут туса лартма тытăнĕç. Гитлер вăрçăра аяла пулать. Эпир кун çинчен икĕ çул каялла каларăмăр, мĕншĕн тесен эпир вырăс халăхĕн аслă историне ĕненнĕ. Ун чухне эпир ĕç çапла пуласса шаннă. Халĕ ĕнтĕ гитлерла Германия кризис тўсни—факт пулса тăчĕ. Гитлер çак вăрçăра çĕнтерес çук ĕнтĕ. Этемлĕхе чума чирĕ ересрен хăтарнă. Çак çулсенче пулнă юнлă драма хыççăн, халăхсен экономикипе психологине тĕппе çитичченех кисрентернĕскер, обществăри инкексен сăлтавне уççăн кăтартса панăскер хыççăн—истори ĕнтĕ пĕтĕм этемлĕхĕн тепĕр туса хума тăрăшĕ. Кам пĕлет, тăвăлсем пирĕн çĕр çинчи пĕлĕте тата темиçе хут та хупăрласа илĕç. Анчах маяксене лартса тухнă ĕнтĕ, çула палăртса хунă.

Тĕнчери çак пысăкран та пысăк ĕçсем вĕсем пурте, чи малтан, Хĕрлĕ Çар воинĕн ĕçĕ, пуринчен те ытларах—вырăс халăхĕн ĕçĕ пулса тăраççĕ. Унăн çав тери пысăк хастарлăхĕ, вилĕмпе кĕрешнĕ çĕрте ытла та простой пулни, унăн таланчĕ тата никам çĕнтерейми çирĕплĕхĕ пирĕн союзниксене—Англипе Америкăна—тăшмана пĕрле хĕсмешкĕн, гитлерла Германие аркатса тăкмашкăн хăйсен хăватлă çар машинине хатĕрлесе тăратма май пачĕç. Кашкăра пур енчен те хупăрласа илнĕ ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕ кĕрешĕвĕн тĕп йывăрлăхне, иртнĕ икĕ çул хушшинчи пекех, каллех хăй чăтса ирттерет. Гитлер хăйне шăп çак енчен пырса çапасса, ăна эпир вĕлермелле пырса çапасса кĕтет.

Нимĕç вăл вăйлă чух калама çук хаяр, нимĕçе йывăр килсен—вăл пўтсĕр те усал пулать, нимĕçе вăйлăн пырса çапсан—вăл куççуль юхтаракан романтик пулса тăрать, пĕтĕм тĕнчене Германия телейсĕр çĕршыв, йăваш тата ырă кăмăллă ĕççыннисен чухăн çĕршывĕ, тесе ĕнентерме тăрăшать. Халĕ нимĕçĕн ĕçĕсем начар, çавăнпа вăл хăйĕн çиллине шăнарма тĕрлĕ ирсĕрлĕхсем шырать.

Хĕрлĕ Çар воинĕсем, сире эпĕ Германин „хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн“ документне пĕлтеретĕп. Çав документа Берлинран (Берлин—Шенеберг, Баденше-Штрассе 51) „Украинăри йĕркелĕх полицин“ командующине янă, çак командующи штабĕн начальникĕ вара, Мюллер-Брункгорот ятлăскер, йĕркелĕх полицин командирĕсене пурнăçа кĕртме янă. Пирĕн алла пĕр Лоозе ятлăскер алă пуснă экземпляр лекнĕ.

Акă вăл документ.

Хĕçпăшаллă вăйсен верховнăй командованийĕ. Содержани: тыткăна лекнĕ совет çыннисене клеме çапасси.

„1. Тыткăна лекнĕ совет çыннисене хăйне уйрăм клеме çапас пулать.

2. Вăл клеме аялалла сарăлакан шĕвĕр кĕтес форми, вăл кĕтесĕн пысăкĕшĕ 45 градуса яхăн, енĕсем пĕр сантиметр тăршшĕ, ăна сулахай купарчана çапаççĕ. (Кунта аялалла сарăлакан шĕвĕр кĕтесĕн формине кăтартса панă).

Клеме çапасси вăл врач ĕçĕ мар, çавăнпа та, тата санитари персоналĕ çитмен пирки, вăл ĕçе тума нимĕçсен санитари персоналне хушмалла мар.

5. Çаксене клеме çапмалла:

а) Хĕвелтухăçĕпе Украинăри хĕçпăшаллă вăйсен командующийĕн районĕнче тата генерал-губернаторствăри çар командованийĕн районĕнче çĕнĕрен тыткăна илнĕ совет çыннисене пурне те—санитари тĕлĕшпе пĕрремĕш хут тасатнă вăхăтра.

б) Украинăн верховнăй командованийĕн районĕнче тыткăна лекнĕ ытти çынсене пурне те 1942 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕччен клеме çапмалла. Çак приказа пурнăçа кĕртни çинчен 1942 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕлтермелле.

6. Çак ĕçе туни тыткăна лекнисене ĕçлеттерме чармалла мар.

7. Клеме çапсанах ун çинчен пĕрремĕш личнăй карточкăра, „уйрăм паллăсем“ тенĕ графара, „Λ 1942 çул“ тесе çырса паллă тумалла“.

Çак приказа ăнлантарса пама кирлĕ-и? Çук, кирлĕ мар. Ăна вуласан, Хĕрлĕ Çарăн кашни воинĕ хăйĕн пăшалне лайăхрах тасатса хурĕ тата хурçă каскăн чĕнне хытăрах çыхса хурĕ. Çав приказ пирки тарăхмалла-и? Çук! Мăнкăмăллисем хăйсен чунĕн çирĕп йĕркине тарăхтармаççĕ, вĕсем тăшмана хытă тата лăпкăн кураймасăр вĕлереççĕ. Çавăн пек тасамар ĕçсем тунăшăн, сире, нимĕçсем, ылхав.

Акă мĕнле тăшман иккен эсĕ, нимĕç! Куçлăхне тăхăнать те, хĕртнĕ клеме илсе, тыткăна лекнĕ красноармеец патне пырса ларать. Нибелунг, Вотан вăрçă туррин ывăлĕ, этемрен асли! Клеме санăн питў çинче намăслăхăн пур тĕрлĕ тĕсĕсемпе çуталса çунса тăрать. Халь эсĕ мĕне ытларах юрататăн: сана пăшалпа пемелле-и, е санăн клемеллĕ питне сурмалла-и? Хĕрлĕ Çарăн воинĕ малтан пеме, унтан сурма кăмăл тăвать.

АЛЕКСЕЙ ТОЛСТОЙ.

„Правда“ хаçат, августăн 2-мĕшĕ.

РСФСР НАРКОМЗЕМĔН СĔНТĔРВĂРРИНЧИ ÇĔРЙĔРКЕЛЎПЕ МЕЛИОРАЦИ ТЕХНИКУМĔ

çĕрйĕркелў тата гидротехника отделенийĕсен пĕрремĕш курсĕсене студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Гидротехника отделенийĕ вăтам образованиллĕ гидротехниксене хатĕрлет. Отделенирен çак ĕçсене: гидротехника сооруженийĕсем, пĕвесем, пĕверен ытлашши шыва юхтармалли шăтăксем, çаврака тата шахтăллă çăлсем тăвас тĕлĕшпе шыравсене туса ирттерес, проектсем хатĕрлес тата çав сооруженисене туса лартас ĕçсене, шурлăхлă çĕрсене типĕтес, тип çĕрсене шăварас, искусственнăй йĕркепе çумăр çутарас, çĕре тарăн тата тарăнмар пăраласа шăтарас, çавăн пекех тата колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем валли шыв пăркисемпе гидроэлектростанцисем лартас ĕçсене лайăх пĕлекен гидротехниксем вĕренсе тухаççĕ.

Çĕрйĕркелў отделенийĕ çĕрйĕркелў техникĕсене хатĕрлет. Ку отделенирен çак ĕçсене лайăх пĕлекен çĕрйĕркелў техникĕсем вĕренсе тухаççĕ: ялхуçалăх карттисем тумашкăн, çул мĕнле туса каймалли проектсем тумашкăн, промышленность сооруженийĕсемпе пурăнмалли çуртсем лартма кирлĕ проектсем тумашкăн вырăна тăрăхла тата çўлелле ўкерсе илес ĕçĕн геодези техникине (теодолитпа тата мензолпа ўкерсе илессине, нивелировка тăвассине лайăх пĕлекенсем, çавăн пекех тата МТС-сен, совхозсен, колхозсен хуçалăхлă центрĕсем валли çĕр уйăрса парса планировка туса пама лайăх пĕлекенсем вĕренсе тухаççĕ.

Техникумра виçĕ çул вĕренмелле.

Техникума 15 çулхи çамрăксенчен пуçласа 35 çула çитнĕ çынсене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 25-мĕш числиччен илеççĕ. Заявленисемпе пĕрле çак документсене памалла: вĕренсе тухни çинчен калакан удостоверени, сывлăх çинчен врач панă справка, автобиографи тата сăн ўкерчĕкĕсем иккĕ.

1941, 1942 тата 1943 çулсенче туллимар вăтам шкултан „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе тухнисене, çавăн пекех тата вăтам шкулăн 8-мĕш, 9-мĕш тата 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене Техникумăн 1-мĕш курсне испытанисемсĕрех илеççĕ. Испытанисĕрех Хĕрлĕ Çартан таврăннисене илеççĕ, вĕсем туллимар вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисенчен кая мар пĕлеççĕ пулсан; ыттисене пурне те экзаменпа илеççĕ. Экзаменсем сентябрь уйăхĕн 25—30-мĕш числисенче пулса иртеççĕ, вĕсем çак предметсемпе пулаççĕ: математика, вырăс чĕлхи, СССР Конституцийĕ. Çав предметсене туллимар вăтам шкулта вĕрентекен программăра кăтартнинчен кая мар пĕлмелле.

Вĕренме илнисене пурне те общежитие вырнаçтараççĕ, сывăрмалли хатĕрсем параççĕ

Вĕренме илнĕ отличниксене тата экзаменсене пур предметсем тăрăх та „отлично“ паллăпа панисене государство стипендине параççĕ.

Вĕренме октябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче тытăнаççĕ.

Техникумăн адресĕ çапла: гор. Мариинский Посад, Чувашской АССР, улица Ленина, дом № 3, Техникум землеустройства и мелиорации.

ТЕХНИКУМ ДИРЕКЦИЙĔ.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МĔНПУР АВТОХУÇАЛĂХСЕН РУКОВОДИТЕЛĔСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Чăваш АССР Совнаркомĕн çак çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче йышăннă 899-мĕш номерлĕ постановленийĕ тăрăх, Чăваш АССР-ĕнчи мĕнпур автохуçалăхĕсемшĕн пуриншĕн те çул çўремелли пĕр формăллă лист пулать.

Август уйăхĕнчен пуçласа автомашинăсем çав пĕр формăллă çул çўремелли лист пулсан кăна çўреме пултараççĕ, урăх формăллă листсемпе çўреме чарса лартнă.

Автохуçалăхсенче çав çул çўремелли листсен бланкисене çирĕп отчетность бланкисене сыхласа хисепе илсе тăмалли положенире кăтартнă йĕрке тăрăх сыхласа хисепе илсе тăмалла.

Çул çўремелли листсене илме автохуçалăхсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Автотранспорт Управленин Автотехснабне çак адреспа пымалла: гор. Чебоксары, Союзная, 4. Телефон 3—80.

ЧАССР СОВНАРКОМĔ ÇУМĔНЧИ АВТОТРАНСПОРТ УПРАВЛЕНИЙĔ.
ЧАССР НКВД УМ ГОСАВТОИНСПЕКЦИЙĔ.

Шупашкарти Энергетика Техникумĕ

1-мĕш курса вĕренме илет.

Техникум çакăн пек специалистсене хатĕрлет: дизелист, электрик тата строитель-техник. Техникума туллимар вăтам шкулсене „отлично“ е „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе пĕтернĕ çамрăксене—экзаменсăрах, ыттисене испытанипе илеççĕ.

Ку техникума кĕмелли условисем çинчен тĕплĕнрех „Красная Чувашия“ хаçатра июнĕн 25-мĕшĕнчи 130-мĕш №-те пĕлтернĕ.

Справкăсем ыйтса пĕлмелли тата заявленисемпе документсем ямалли адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 23.

САРАТОВРИ КОНСЕРВАТОРИ ÇУМĔНЧИ ЧĂВАШСЕН ОПЕРНĂЙ СТУДИНЕ

кĕрес текенсен заявленийĕсене сентябрĕн 1-мĕшĕччен илеççĕ. Испытанисем сентябрĕн 5—7-мĕш числисенче Шупашкарта пулаççĕ.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Герцена, 9, Управление по делам искусств при Совнаркоме Чувашской АССР.

Торгплодоовощăн Шупашкар сывăхĕнчи районсен конторине приемщиксем, счетовод тата инспекторсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Кировский поселок, Гражданская, 2.

Шупашкарти ликерсемпе эрех завочĕ Канашри „Красный воин“ артельне 1942 çулхи августăн 6-мĕшĕнче 5431-мĕш номерпа панă приемнăй накладной текен квитанцие çухатнă пирки, тĕрĕс мар тесе шутламалла. Вăл квитанци çинче артельтен 962 тенкĕ те 50 пуслăх пушă бутылкăсем йышăннă тесе çырнă.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 2-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

В старом Чикаго

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

НЕУЛОВИМЫЙ ЯН

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

ВĂРНАРТИ ЗООВЕТТЕХНИКУМ

1943—44 вĕренў çулĕ пуçланас умĕн ВĔРЕНЕКЕНСЕМ ИЛЕССИ çинчен пĕлтерет.

Техникум зоотехниксене хатĕрлет.

Техникума 15—30 çулхи çамрăксене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене е унтан ытларах вĕреннисене илеççĕ.

Заявленисене илме пуçлана, сентябрĕн 20-мĕш числиччен илеççĕ. Заявленипе пĕрле çак документсене памалла: а) хăçан çуралнине пĕлтерекен свидетельство, б) вĕреннине пĕлтерекен свидетельство, в) сывлăх мĕнлине кăтартакан справка, г) çар обязанноçĕ тĕлĕшĕнчен мĕнле тăнине кăтартакан справка (военнообязаннăйсем кăна параççĕ).

Кĕрес текенсем çак предметсемпе экзамен тытаççĕ: а) вырăс чĕлхипе (çырса та, сăмахпа та), б) математикăпа (çырса та, сăмахпа та), в) СССР Конституцийĕпе (сăмахпа).

Вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен тĕп предметсемпе „отлично“ паллăпа, ытти предметсемпе „хорошо“ паллăпа вĕренсе тухнисене экзаменсăрах илеççĕ. Çавăн пекех тата вăтам шкултан вĕренсе тухнисене е 9 класс пĕтернисене те экзаменсăрах илеççĕ.

Вĕренў çулĕ октябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать.

Пенсионерсен ачисем тата Хĕрлĕ Çара илнисен ачисем вĕреннĕшĕн укçа тўлемеççĕ.

Техникумăн хăйĕн библиотека, столовăй пур.

Заявленисене, ыйтса пĕлмеллисем пулсан вĕсене те кашни хăй техникума кĕрсе пама е кĕрсе ыйтса пĕлме пултарать. Почтăпа яма та юрать.

Адрес çапла: Чувашская АССР, п/о Вурнары, дер. Булатово, Зооветтехникум.

ЧЕБТОРГА

çакăн пек бухгалтерсем кирлĕ: а) производство енĕпе ĕçлеме; б) суту-илў ĕçĕнчи учета пĕлекенсем.

Ĕç укçи калаçса татăлнă тăрăх.

Кĕрес текенсен Чебторгăн главнăй бухгалтерĕнчен ыйтса пĕлмелле.

ЧĂВАШ АССР НАРКОМТОРГНЕ

яланхи ĕçе çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: контрольпе учет бюровĕн старши контролерĕ, управделами, ученица-машинистка тата экономистсем.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 209 промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.